# Кĕр! кĕрлерĕ Кĕрсăри



Шупашкар районĕнчи Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн халăхĕ октябрĕн 10-мĕшĕнче Мускав çулĕ хĕрринчи Чемен карти текен хулаш йĕри-тавра кĕр-кĕрлесе йывăççем лартрĕ, кăвайт чĕртсе 16 хуран яшка-шӳрпе пĕçерчĕ. Хулаш варринчи çавра шилĕк çине тухса Çăкăр касрĕ, Пичке пуçларĕ, çичĕ метр çӳллĕш Асăну юпи лартса паттăрсене асăнчĕ, юрларĕ, ташларĕ, кĕрекере кĕр-кĕрлесе сăйланчĕ.

Кунти халăх хирти ĕçсене пĕтерсен авалтанпах Кĕрсăри ирттернĕ. Кĕр мăнтăрĕпе сăра туса, икерчĕ пĕçерсе, автан е чăх пусса, тăвансене пĕрле пухса хăналаннă. Эпĕ ӳснĕ вăхăтра Кĕрсăрине «колхоз ĕçки» тетчĕç.

Кĕрсăри вăл ĕçкĕ-çикĕ кăна мар. Вăл хĕле мĕнле кĕтсе илнине тĕрĕслемелли сăлтав та. Малтан карта пăттисем, килйыш пăттисем тумалла, унтан тин Кĕрсăрие каймалла тетчĕç. Кил-çуртра, хуралтă-витере çине тăрсах «ăшă тытаттăмăр»: шăтăк-çурăка саплаттăмăр, тăпрас купалаттăмăр. Колхозра вара çуна-урапана, сарайсемпе витесене, садсемпе утарсене, кĕлетсемпе ампарсене, пĕтĕм хуçалăха тĕрĕслесе тӳрлетнĕ.

Тăван тавралăха, кил-çурта тирпейлесси халĕ те манăçа тухман. Çапах та ĕлĕкхи чылай нуша хыçа юлчĕ. Ĕçлеме кăна мар, канмасăвăнма та, ăс-хакăлпа пултару ăсталăхне туптама та майсем пур ĕнтĕ. Лӳппер чирне сирме, хастартарах пулма вăй-хал кăна кирлĕ!

«Эй тата! Тупнă Кĕрсăри!» – тенсем те пулчĕç Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕн администрацийĕнче мухтарсемпе, депутатсемпе пухăнса калаçнă чухне. Культура ĕçченĕсемпе вулавăшçăсем, ял мухтарĕсем нумай вăй хунă уява йĕркелеме. Хальлĕхе халăх ĕçĕнче шкулсен витĕмĕ курăнмасть-ха.

Кахалпа сӳрĕкĕн пин сăлтав. Çĕктерсем ял уявĕсене хутшăнманнине ăнланма пулать. Вĕсем, Атăл хĕррине аякран килсе вырнаçнă çынсем, пирĕн йăла-йĕркене пĕлмеççĕ. Хорнсорпа Криккакасси, Ойкасси-Варпоçсем темшĕн пуçтарăнса тухайман та, вĕсен станĕсем тĕлне кӳршисем йывăç лартрĕç, ялĕсен ячĕпе вилнисене асăнмалăх тепрер хуран апат çакрĕç. Кӳршĕ-кӳршех, тепĕр чухне тăванран та çывăхрах!

Тĕп Кĕрекене ваттисене, аякран килнĕ хăнасене вырнаçтрчĕç. Илле Валучи Кĕр карчĕ пулнă, Пуштальонка Суя вара Кĕр карчăкĕ иккен. Вĕсем тавра йăлтăр-ялтăр, симĕс те сарă, кĕрен те хĕрлĕ тумлă Кĕр пике çӳрерĕ. Ик авăрлă кĕреке куркисене тытса, кĕрекеçĕсем тенкелсем çинчен çĕкленчĕç те кĕреке юррине пуçласа пачĕç, вара пĕтĕм халăх пĕр çын пек янăратрĕ наци гимнне – «Алран кайми аки-сухине».

Хулаш варринчи сарă шилĕк çинче 16 ял халăхĕн ăстисем юрланине, аякран килнĕ хăнасем уява саламланине тăранайми итлесе çамрăклантăм.

Пенсионерсен партийĕн ертӳçи, Елчĕк чăвашĕ Валерий Сапожников сцена çинче хăй тĕллĕнех йĕркеленсе кайнă «16 ялăн пĕрлештернĕ хорне» хăйĕн юратнă юррине /«Аненне анне тееççĕ»/ дирижерласа юрлаттарнине, Шашкарсем Тимĕр Тяпкин Станьялĕнчи Ваттисен канашĕн ертӳçине Чаптай Эльмене, уяв режиссерне, Патăрьел чăвашне Эдуард Бахмисова тата ыттисене хаклă парнесем панине, Чăваш халăх академийĕн президенчĕ Евгений Ерагин çак уява хатĕрленĕшĕн тата тăван халăх йăли-йĕркине упранăшăн район пухăвĕн депутатне, унччен Вăрман-Çĕктер хутлăхĕн пуçĕ пулнă Николай Хорасева тата хулаш хуçине, Чăваш таврапĕлӳçисен союзĕн председательне Сергей Сорокина Академи медалĕсене çакса янине, ытти тем тĕрлĕ хаваслă мереккене çырса та пĕтерейместĕп. Пирĕн уявсене сиктерми хутшăнакан паттăр çын, Ишек патĕнчи Чаканар маттурĕ Николай Фомиряков Асăну Юпи умĕнче курайпа «Ункă урлă хуркайăк вĕçет» кĕвве чун-чĕрипе тимлесе каланине çывăхран итлесе пĕр савăнтăм, пĕр хурлантăм. Юпа юррисене тахçан Кĕр çурти каçĕнче итлесе макăрнăччĕ эпĕ. Вĕсене халĕ клубсенче, ларма каçĕсенче чӳк уйăхĕнче пĕрре çамрăксене итлеттерсе пăхсан сăвапла пулĕччĕ.

Ишлей-Шарпаш ялĕсен «пĕрлештернĕ хорĕ» виръялсен авалхи юррисене ятарласа вĕренсен, халăх умне турисен тумĕпе тухсан республикипе палăрма пултарĕччĕ. Апла тума, паллах, маттур ертӳçĕ кирлĕ. Ун пекки хальлĕхе Шупашкаркасси культура керменĕнче тупăнаймасть пулмалла-ха... Хыркассинче, Ункăпуçĕнче, Çӳлтикассинче таврари паллă купăсçăсем, юрă ăстисем пур. Çавсене пĕрлештерме райпуху депутатне Леонид Захарова, Хыркасси ял мухтарне, музыка шкулĕн директорне Людмила Горшковăна е халăх ĕçне хĕрсе йĕркелекен ертӳçĕне, ял хутлăхĕн депутатне Вячеслав Спиридонова ыйтмалла мар-ши?

Чăваш таврапĕлӳçисен союзĕн Шупашкар районĕнчи кураторĕ, Иккасси патĕнчи Шорккаран ятарласа килнĕ Валерий Виноградов ăсчахпа хулаш тавра ирхи хатĕрленӳ вăхăтĕнчех иккĕ çаврăнтăмăр. Пĕри те тепри хĕрсе тăрăшать. Çӳлтикассисем хĕрлĕ палан пахчине кунта куçарса килнĕ темелле, Салапайсен капăр купăстисем карта çумĕнче саркаланса ларaççĕ, Вăрманкассем ял пӳрчĕ умне типĕтнĕ пулăсене шерепелесе çакнăччĕ. Пăхăсăн, апат-çимĕçе пахалакан комисси çитнĕ çĕре пĕр пулă та юлман! Хăмлаллă лайăх сăрапа типĕтнĕ пулă пит килĕштереççĕ çав. Çитес Хравути пуххине Вăрманкассем шыв-шур çимĕçĕпе ăмăртăва тухма палăртса хучĕç. Ку енĕпе вĕсене Атăлъялсем те, Хурăнсурсемпе Кипечкассисем те çĕнтереес çук пулĕ. Çавăнпа вĕсен вăрман е хир пулăхĕнчен пĕçернипе ăмăртсан тĕрĕсрех пулмĕ-и терĕм?

Кайри Ункăпуççем Кĕрсăрине йышлăн тухайман, анчах ял чысне тивĕçлĕ тытрĕç. Вĕсем тĕрĕслевçĕсен шăнма пуçланă аллисене вучахран кăларнă çĕрулмипе пĕçертрĕç те, çак кĕтменлĕх пурне те савăнтарса ячĕ. Çитес уява çĕрулмирен хатĕрленĕ 42 тĕрлĕ апат-çимĕçпе тата Ункăпуççен рецепчĕпе тухма сăмах пачĕç. Хыркассисем, Атăлъялсем, Кипечкассисем, Станьялсем, Çӳлтикассисем, Салапайсем, Шупашкаркасисем кĕрекисене сĕтел ури авăнмалăх çиме-ĕçме кăларса лартнăччĕ. Унта мĕн-мĕн пуррине сăнаса тухсан Шелепин «Çĕрпӳ пасарĕ» пек поэма çырăнма пултарать. Талантлă та ĕçчен пирĕн чăваш хĕрарăмĕсем! Мĕн тĕрлĕ кучченеç хатĕрленĕ, çĕр çывăрмасăр вĕретнĕ, кун кунласа пĕçернĕ. Укçашăн мар, мухтавшăн мар. Тата хăш халăх çапла тума пĕлет-ши?

Апат-çимĕç пахалакан жюрие кĕтнĕ пирки эпĕ сайра тĕл пулакан авалхи çимĕçсене сăнаса пытăм. Анат-Кĕнерсен «Палан пăттине», Кипечкассисен «Палан нимĕрне», Атăлъялсен «Кавăн тинкĕлине», Хыркассисен «Типĕ шарккуне», Атăлъялсемпе Салапайсен «Хуран куклисене» палăртрăм. Сĕт-турăх апачĕсенчен чăкăт нумайччĕ. Ытти çук. Хыркассисен кăна уйран пурччĕ, сĕтелĕ çинче катка пек кавăнсем, çĕлен пек хăярсем, ямшăк пек кишĕрсем юмахри пек каттаччи чупатчĕç. Таçтан мурне эпĕ кишĕр кукăлĕ пирки «анне çапла пĕçерсе паратчĕ» тесе каларăм та, мана çур кукăлне вăйпах парса ячĕç. Вăл кукăле килтисем те юратса çирĕç, кишĕрне мĕнле вĕтетнине, çăмартине, çуне мĕн чухлĕ янине сăнаса пăхрĕç. Иккен, мелне пĕлсен, ӳркенмесен, чăнах та, çĕтĕк çăпатаран та техĕм пӳремечĕ тума пулать иккен!

Кĕрпе-çăнăхран тунă икерчĕ, хăпарту, кукăль кашнин сĕтелĕ çинчех тупăнчĕ, анчах кăвас икерчисем, йăвачасем, салмасем, çӳхӳ, качмăк, юсман тата ытти пачах курăнмарĕ.

Аш-какйран тунисем те пĕр евĕрлĕрех пулчĕç. Шăрттан, чашлама, шӳрпе, кукар, аш апачĕ... Çӳрме, тултармăш, тĕлкĕр, тюнтĕк тенисене шырарăм – тупаймарăм. Питтиткассисем поход хуранĕпе аш-пăшран темĕнле вăрттăн апат хатĕрлетчĕç, анчах вăл пиççе çитейменччĕ-ха...

Ку пуçламăшĕ пулчĕ. Хравути пуххине кашни ял суйласа илнĕ пĕр-пĕр ретри апат-çимĕçпе тата хăйсем шутласа тупнă «фирменнăй» рецептпа тухма килĕшрĕç.

Кĕрсăринче сăра пахалăхне хаклама хĕн килчĕ. Мĕн тĕрлĕ сăра çукчĕ унта! Эпĕ аннепе пĕрле сăра пайтах вĕретнĕ. Лаçри хуран айĕнче виçĕ талăкĕпех йăмра каски йăсăрланса выртатчĕ, чансенчи ăслана хĕртнĕ чулсем ярса сиктереттĕм, чанран улăм, хăмла çырли аври тата ытти сиплĕ курăк хунă курите тăрăх пĕчĕккĕн юхтарса каткана пылланма лартаттăм. Урпа е ыраш салачĕпе тунă сăрана эпĕ тӳрех уйăрса илетĕп.

Кипечкассинчи 82 çулхи Олимпиада Ивановна Виноградова сăрине Ылтăн Диплом панă пулăттăм. Шупашкаркассисен, Çӳлтикассисен, Атăлъялсен сăрисем те Пĕрремĕш диплома тивĕçлĕ. Анчах «на вкус и на цвет товарищей нет» тесе ахальтен каламан. Хула сăрине ĕçсе çăвар тутине пăснисем йӳçек те шĕвĕ сăрасене мухтарĕç. Теприсем, ман шутпа, чăнласа чăваш сăрине ĕçсе те курман. Чĕкĕнтĕртен вĕретнĕ чӳлмек кăвасне «пылак сăра» тесе мухтакан та, ура сыппине тытакан юрай кăрчамине «сахăр янă» тесе хĕрсене ĕçме сĕнекен те тĕл пулчĕ.

Сăра ăмăртăвĕнче пĕрремĕш вырăна Малти Ункăпуç ялĕ тухрĕ. Вĕсем çĕтел çине 14 ăста тĕрлĕ рецептпа вĕретнĕ сăра савăчĕсене йĕркипе лартса тухнă. Кам вĕретнĕ, мĕн йышши сăра, мĕн-мĕн ярса пĕçернĕ - йăлтах çырса хунă, Çапла пулмалла та. Максăма, кăрчама е симпыл сăрине ыйтмарăм. Ытти виçĕ тĕрлĕ сăрине сыпса пăхрăм - çутă шевле пек «хĕр сăри» килĕшрĕ, «пыллантарнă салат çăри» çăраччĕ, çăкăр вырăннех пуласси паллă, «хăмла витерни» чехсен 12 градуслă сăринчен кая мар терĕм. Чи хаяррине /18 ĕмĕрти рецептпа вĕретнине/ ыйтрăм та /вĕсем икĕ тĕрли пулнă-мĕн/, эпĕ çитнĕ çĕре юлман та иккен!

Уяв хытă кĕрлерĕ. Шилĕк тулли ташлаканччĕ. Сулланакан ӳсĕр çын пĕрре те курмарăм. Кашни ял станĕнчех, кашни ял кĕрекинчех хаваслă халăх юрлани, шăкăл-шăкăл калаçни манăн ватă чуна хавхалатрĕ. «Сирĕн кĕрекĕрсем çут хĕвеллĕ, мĕнле капăрлатма пĕлнĕ-ши? Сирĕн кăмăлăрсем пин телейлĕ, мĕнле сапăрланса килнĕ-ши?» – тесе юрларĕç пирĕн ялсем. – Ай-хай, хăтаçăм та тăхлачăçăм, Эпир активнĕ Кĕрекене хăла пылсем тулса юлмĕç-ши? – терĕç вĕсем.

«Тăван кĕреки – мăн кĕреке. Кĕреки варринче ват тăвансем... Кĕреки енне тайăлам-ши? Атте-анне енне тайăлам-ши?» – ку юрра Кипечкассисем юрларĕç. Çаксене тăнланă хыççăн «Вунулт кĕреке хушшинче вунулт алтăр вылянать. Вунулт алтăр çитменнипе сарă янтал хускалать. Вунулт янтал шерпечĕпе тутлă чĕлхе якалать», – тесе такмакларĕç Атăлъял станĕ енчен.

Тав сана, асăнупа пĕрлĕх уявĕ – чĕнтĕрлĕ кĕрекесенче кĕрленĕ Кĕрсăри!

**Виталий СТАНЬЯЛ.**





